Пурнăçа, çĕршыва юрат, тăван халăх мĕнпе чĕрĕ, çавна юрат!

# ТУСЛĂХ

НУРЛАТ РАЙОНĔН ОБЩЕСТВĂПА ПОЛИТИКА ХАÇАЧĔ
ОБЩЕСТВЕННО-ПОЛИТИЧЕСКАЯ ГАЗЕТА НУРЛАТСКОГО РАЙОНА

*Хаçат 1931 çулхи июлĕн 9-мĕшĕнче тухма пуçланă.* | N19 (4588) | *1998 çулхи февраль (нарăс) уйăхĕн 18-мĕшĕ, юнкун* | *Палăртнă хакпа.*


## Нурлат хăнасене йышăнать

**Хальхинче "Татнефть" акционер обществин тĕп инженерĕсен семинар-канашлăвне хутшăнакансене.**

Энергипе тивĕçтерессин тата станок-качалкăсен ĕçне автоматизацилессин автоматла системин техника хатĕрĕсен мĕнпур комплексне ĕçе кĕртесси - нефть кăларакансен хальхи вăхăтри сивĕч ыйтăвĕсенчен пĕри. Ăна Тутарстанти нефть промыслисенче пысăк промышленность масштабĕсенче çĕнĕ технологисене ĕçлесе хатĕрлес тата пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе "Татнефть" акционер обществин стратегиллĕ программинче тĕп вырăн уйăрнă.

Çак ыйтусене татса пама пĕрремĕшĕсем пулса нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управлени тытăннă. Палăртнă тĕллеве пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пуçламăш ĕç тапхăрне ăнăçлă ирттернĕ. Çакна шута илсе çур çула яхăн каярах "Нурлатнефтьре" производствăпа техника канашлăвĕсенчен пĕрне ирттернĕ. Акă каллех Нурлат çĕрĕ çинчи тĕлпулу. Хальхинче кунта кăçалхи февралĕн 12-мĕшĕнче нефтьпе газ кăларакан управленисен тĕп инженерĕсемпе "Татнефчĕн" ĕç тăвакан аппарачĕн специалисчĕсен семинар-канашлăвĕ пулчĕ.

Семинарăн практикăлла пайĕ производство объекчĕсенче, Кутушири подстанцире, Кутушири нефтьпе пуян 262-мĕш номерлĕ кустра, нефтьпе газ кăларакан 3-мĕш номерлĕ цехăн диспетчер пунктĕнче.

Çĕнĕ системăшăн тăрăшакансенчен пĕри "Татнефть" акционер обществин тĕп энергетикĕ В.Я.Чаронов, нефть скважинисенче энергие перекетлекен системăна пурнăçа кĕртнине тишкерсе тухрĕ тата нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин ертӳçисемпе специалисчĕсем ку тĕлĕшпе лайăх ĕçленине палăртрĕ.

"Нурлатнефть" управлени начальникĕ М.М.Хузин, тĕп инженер Р.А.Сафиуллин хăнасене станок-качалкăсене автоматла ĕçлеттерессин çĕнĕ технологине алла илес тĕлĕшпе ĕçлекен опытпа сăнав участокĕпе тĕплĕн паллаштарчĕç, чылай ыйтусем çине хуравларĕç.

Семинар-канашлăвăн теориллĕ пайĕ нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин конференц-залĕнче иртрĕ, унта "Татнефть" акционер обществин, нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин структурăри подразделенисен ертсе пыракан специалисчĕсем, çак профессие вĕрентекен аслă вĕренӳ заведенийĕсен представителĕсем тухса калаçрĕç.

Канашлура "Татнефть" акционер обществин супервайзерĕ В.И.Рогов акционер обществинче пăрăхсем хывас тĕлĕшпе ĕçсем мĕнле пыни, кунта ĕç пахалăхне ӳстермелли çинчен тунă отчета итленĕ.

* * *

Семинар-канашлăва хутшăннисем нефтьпе газ кăларакан "Нурлатнефть" управленин хăшпĕр объекчĕсенче, вĕренӳпе курс комбинатĕнче, спортпа сывлăх комплексĕнче, бассейнра пулса курчĕç.

"Татнефть" акционер обществин тĕп инженерĕ Ш.Ф.Тахаутдинов, семинара йĕркеленĕскер, ĕçсен шайĕпе паллашнă хыççăн, Нурлатри промысловиксен ĕçне пысăк хак пачĕ тата малашне те ăнăçлăхсем тума сунчĕ.

**В.БУРАЙКИН.**



**Ӳкерчĕкре: "Татнефть" акционер обществин тĕп инженерĕ Ш.Ф.Тахаутдинов вĕренӳ комбинатĕнчи классенчен пĕринпе паллашать.**

## Фермăра столовăй ĕçлет

"Агрохимсервис" акционер обществин хушма хуçалăхĕнче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсен ĕç условийĕсене лайăхлатас, производствăри тăкаксене чакарас тĕллевпе витĕмлĕ мерăсем йышăнаççĕ. Пĕр витене маларахах ĕнесене кăкармасăр тытма, вĕсене УДСпа сума оборудованиленĕ пулсан, халь вара тепĕр корпуса малта пыракан технологи çине куçарас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ: вагон вырнаçтарма никĕс хатĕрленĕ, унпа сумалли зал вырăнне усă курĕç, витесене реконструкцилес тĕлĕшпе те хăшпĕр ĕçсене пурнăçлĕç.

Хальхи вăхăтра сĕт суса илессипе районта виççĕмĕш вырăн йышăнакан хуçалăхра ĕçе çĕнĕлле йĕркелесен, продукци туса илесси чылай ӳсессе шанаççĕ. Выльăх-чĕрлĕх пăхакансен йăла условийĕсене лайăхлатни те çак тĕллевсене пурнăçлама пулăшĕ. Çапла, юлашки вăхăтра пăрахăçа кăларнă йăла пӳлĕмĕсене халь каллех çĕнетеççĕ, тĕпрен илсен, выльăх-чĕрлĕх пăхакансен кану пӳлĕмĕпе хĕрлĕ кĕтесе. Çак кунсенче фермăра столовăй та ĕçлеме тытăнчĕ. Ăна уçнă кун выльăх-чĕрлĕх пăхакансемпе уççăн калаçу пулчĕ. 14 çул хушши повар пулса ĕçленĕ Рамзия Сафинапа тата Елена Фокеева кунне икĕ хутчен вĕри апат пĕçереççĕ. Ферма столовăйĕнче выльăх-чĕрлĕх пăхакансемсĕр пуçне, тĕрлĕ професси çыннисем тата ыттисем те апатланаççĕ.

## КУН хыççăн КУН

### Эпир миçен?

Районти статистика пайĕнче пирĕн корреспондента Нурлат районĕнче 1998 çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне 57140 çын пурăнни çинчен пĕлтернĕ. 1997 çулхипе танлаштарсан, районта пурăнакансен пĕрлехи шучĕ виççĕре яхăн чакнă, çав вăхăтрах хулара пурăнакансен хисепĕ ӳснĕ.

### Халăх переписĕ пуçланать

1999-2000 çулсенче халăха черетлĕ перепис тума шутлаççĕ. Паллах, вăл пирĕн районта та иртĕ. Ун тĕлне хатĕрленес ĕçе анлăн тытăнман-ха, анчах та малтанхи хăшпĕр мероприятисем ирттерме планлаççĕ. Çапла майпа, виçĕ çул иртсен, эпир пирĕн районта мĕн чухлĕ çын пурăннине тĕплĕн пĕлĕпĕр.

### Ĕне выльăх шучĕ чакнă

Вырăнти самоуправленин Совечĕсем панă даннăйсем тăрăх, уйрăм çынсен хуçалăхĕсенчи ĕне выльăх шучĕ, 1997 çулхипе танлаштарсан, 6,7 процент чакнă. Çав вăхăтрах сыснасен шучĕ ӳснĕ. Хальхи вăхăтра районти уйрăм хуçалăхсенче 6551 ĕне, 2089 сысна, 10045 сурăх, 908 лаша, 351 качака тата 385 кролик шутланать.

*Кĕскен*

### Преступлени тăвассипе мĕнле кĕрешмелле?

Иртнĕ эрне вĕçĕнче районти правăна сыхлакан органсен ертӳçисем Тутарстан Республикин Шалти ĕçсен министерствинче пулнă пĕрлехи коллегие хутшăннă. Унта 1997 çулхи ĕç итогĕсене пĕтĕмлетнĕ, преступлени тăвассине, наркомание хирĕç кĕрешес тата килсĕр ачасем тĕлĕшпе палăртнă задачăсене сӳтсе явнă.

### Канашлу пулнă

Шăматкун, февралĕн 14-мĕшĕнче шалти ĕçсен Нурлат районĕнчи пайĕнче ĕçлĕ канашлу пулса иртнĕ. Йĕркене сыхлакансем служба тата транспорт дисциплинине çирĕплетес тĕлĕшпе палăртнă задачăсем çинчен калаçнă. Канашлăва Тутарстан Республикин Шалти ĕçсен министерствин кадрсен управленийĕн начальникĕн çумĕ Р.Ф.Валиуллин хутшăннă.

### Çуртри пушар-инкек

Хăвăн пурлăхна страхланă, санăн социаллă хӳтлĕх, çумра вара пулăшма хатĕр çынсем пулсан, инкек-синкек ытла пысăк мар. Çунса кайнисене район бюджетĕнчен миллиардăн 5 пайне ытла (1997 çулхи хакпа) уйăрса панă.

### Хуралта - ОВО

Шалти ĕçсен Нурлат районĕнчи пайĕ çумĕнчи ведомствăра тăман хурал пайĕ районта 74 объекта сыхлать. 1997 çулхи январь-декабрь уйăхĕсенче ведомствăра тăман хурал пайĕ 13 преступлени тупса палăртнă, çавна май 18 çынна тытса чарнă. Административлă йĕркене пăснин 815 тĕслĕхне палăртнă.

### Сăваплă Валентин кунĕ Нурлатра

Юратакансене хӳтĕлекене - сăваплă Валентина - халалласа февралĕн 14-мĕшĕнче хулари Çамрăксен çуртĕнче тематикăлла дискотека пулса иртнĕ.

### Отличниксен слечĕ

пулса иртнĕ 5-мĕш номерлĕ "Камыр-батыр" вĕрентӳпе воспитани комплексĕнче. Шкулти чи пысăк та çутă зала питĕ лайăх вĕренекен ачасем пухăннă. Слет программине вăйă элеменчĕсем тăрăх йĕркеленĕ.

## Ентеш юбилейне халалласа

Хулари 6-мĕш номерлĕ пуçламăш шкулта вĕренекенсем Гакиль Сагировăн пурнăçĕпе пултарулăхĕ çинчен лайăх пĕлеççĕ. Уроксене часчасах унăн пултарулăхĕпе çыхăнтарса ирттереççĕ. Педагогсем поэтăн район хаçат страницисенче пичетленекен произведенийĕсемпе ачасене, вĕсен ашшĕ-амăшĕсене паллаштараççĕ, ятарлă стенд та йĕркелерĕç. Сагировăн 60 çулхи юбилейне халалласа ирттернĕ каç пысăк уяв пулса тăчĕ. Ачасем ентеш валли парне-альбом туса пачĕç. Тĕрлĕ наци ачисем поэт сăввисене вуларĕç, юрларĕç, ташларĕç. Музыка учительници Альмира Гиззатуллина Г.Сагировăн "Манăн ялăм" тата "Çăлкуç" сăввисем тăрăх кĕвĕленĕ пĕрремĕш юррине юрларĕ, теприне - ачасем. Поэт произведенийĕсене иллюстрацилес тĕлĕшпе йĕркеленĕ конкурсра та ачасем кăмăлпах хутшăнчĕç. Ачасене йывăр шăпаллă çыннăн, ăста поэтăн, художникăн Гакиль Сагировăн творчествипе воспитани пани вĕсемшĕн нимĕн палăрмасăр юлмĕ.

**Суфия СУЛЕЙМАНОВА,**
**Нурлатри 6-мĕш номерлĕ вырăс-тутар пуçламăш шкулĕн директорĕ.**

ДЕВОН-КРЕДИТ
АКЦИОНЕРНЫЙ БАНК

# "Девон-Кредит" акционер банкĕн ăнăçлăхĕсемпе малашнехи тĕллевĕсем

**Нурлат хулинче тата Нурлат районĕнче пурăнакансем!**

"Девон-Кредит" акционер банкĕн Нурлатри филиалĕ районти предприятисемпе, организацисемпе, предпринимательсемпе çыхăну тытса, Тутарстанăн финанс рынокĕнче ăнăçлă ĕçлеме тытăннăранпа тăватă çул çитет.

Çак кĕске срокра филиал клиентсене тивĕçтерессин мĕнпур сферисене пĕлсе çитнĕ, çав шутра банкомат тата вклад операцийĕсен пайĕ урлă ĕç укçине парасси. Кăçал Нурлатри сăнавлă пăралу управленийĕ ĕç укçине банкомат урлă пластикла карттăсемпе парасси çине куçĕ.

Автоматизаци хатĕрĕсене техникăпа пуянлатас тĕлĕшпе питĕ пысăк ĕç пурнăçланă. Паянхи кун тĕлне филиала техникăпа пуянлатнин шайĕ клиентсен кулленхи çивĕч ыйтăвĕсене çăмăл татса пама, малашлăха плансем палăртма май парĕ.

Пирĕн филиал услугисемпе усă курас текенсен шучĕ ӳссе пырать. Çапла, юридически клиентсен хисепĕ 65-рен иртрĕ, уйрăм çынсен 2 пин ытла. Çак цифрăсем "Девон-Кредит" банка шаннине пĕлтереççĕ, унăн тĕп пĕлтерĕшĕ - шанчăклăхпа çирĕплĕх репутацийĕ.

"Девон-Кредит" банк тата унăн филиалĕсем халăха укçа-тенкĕ хывма явăçтарас тĕлĕшпе ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Пирĕн пата пыраççĕ, мĕншĕн тесен пире шанаççĕ. Пысăк процентсем банкăн тĕп кăтартăвĕ пулманни çинчен паян кашни пĕлет. Финанс сферинче ĕçлесе пухнă опыт чылай банксемпе кредит кампанийĕсем вкладчиксене питĕ пысăк процент ставкисемпе илĕртнине, анчах халăх укçине пуçтарса вĕсем кредитсене тата ытти активлă операцисене тупăшлă та усăллă вырнаçтарма пултарайманнине пĕлтерет.

Çавна пула банксем вкладчиксене процентсем тӳлеймеççĕ тата час-часах хывнă укçана та тавăрса параймаççĕ.

Пирĕн банк халăх вклачĕсемпе ĕçлессин пĕлтерĕшне, яваплăхне лайăх ăнланать. Çавăнпа та тĕплĕн шухăшласа, пĕр енчен, консервативлă кредит политикине тĕпе хурса ĕçлет, çакă тӳрре тухрĕ. Банк йышăнакан кашни решение, банк процентсене хăть хăш вăхăтра та тӳлесе татма тата вкладчик ыйтсанах унăн укçине парса татма май пултăр тесе тĕрлĕ енчен тĕплĕн тишкерсе пăхса тухать.

Филиал йĕркеленнĕ пĕрремĕш кунранах пысăк тата пĕчĕк ĕçсем пурнăçлакан партнерсен интересĕсене шута илсе, хăйсен клиенчĕсем валли лайăх условисем туса парас тесе ĕçлет. Эпир хамăрăн клиентсене меллĕ пултăр тесе ĕçлетпĕр, кам та пулин канаш ыйтсан вара, ăна пулăшма май пулнишĕн питĕ савăнатпăр.

Нурлатри филиалăн тăватă çул хушшинчи ĕç кăтартăвĕсем:

(деноминациленĕ укçа-тенкĕпе)

- баланс тупăшĕ 15004 млн. тенкĕ
- пурĕ налуксем тӳленĕ 1598 млн. тенкĕ

вĕсенчен вырăнти бюджета 862 млн.тенкĕ

- вкладсем тăрăх процентсем тӳленĕ 3542 млн. тенкĕ

Нурлатри филиал 1997 çула çакăн пек кăтартусемпе вĕçлерĕ:

- баланс тупăшĕ 3 392 млн. тенкĕ
- налуксем тӳленĕ 1497 млн. тенкĕ

çав шутра вырăнти бюджета 801 млн. тенкĕ

- вкладсем тăрăх процентсем тӳленĕ 1194 млн.тенкĕ.

Банк Совечĕн решенийĕпе çак çулсенче Нурлатри филиал районта ирттерекен мероприятисем валли 18 миллион тенкĕ пана. Кусем - ачасем валли çĕнĕ çул парни туянма, вăрçă ветеранĕсене Çĕнтерӳ кунĕнче тата Ватă çынсен кунĕнче парнесем пама, мечĕт, чиркӳ, 4-мĕш номерлĕ шкула тума, Г.Кариев ячĕпе хисепленекен çамрăксен тутар театрне йĕркелеме.

Хальхи вăхăт тĕлне "Девон-Кредит" акционер банкĕн 10 филиалĕ пур, вĕсем Тутарстан республикин кăнтăр-хĕвелтухăç енчи промышленность хулисенче тата унăн тĕп хулинче вырнаçнă. Нефть кăларакан тата нефть ĕçлесе хатĕрлекен отрасльсен пысăк рентабеллĕ предприятийĕсем, нефтяниксене оборудованипе тивĕçтерекен тата партнерсем шутланакан предприятисем, бюджет тата обществăлла организацисем, предпринимательсем, Тутарстан Республикинче пурăнакансем банк клиенчĕсем пулса тăраççĕ. "Девон-Кредит" акционер обществи тивĕçтерекен юридически клиентсен пĕрлехи шучĕ 1600 ытла. Уйрăм çынсен - 64000 ытла.

Банк хăйĕн хăватне çулсерен ӳстерет, тĕнчере малта пыракан ушкăнсемпе танлашать, кăтартусемпе, тĕпрен илсен, банк рентабеллĕхĕн шайĕпе Раççейри пысăк банксенчен - "Менатеп", "Мост-банк", "Альфа-банк" тата ыттисенчен чылай иртterет.

Раççейри банксен рейтингĕнче 9 уйăх результачĕсемпе "Девон-Кредит" чи рентабеллисем хушшинче виççĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

"Девон-Кредит" банк 1997 çула, тĕпрен илсен, çакăн пек результатсемпе вĕçлерĕ:

1. Уставнăй капитал 7 хут ӳсрĕ. 1997 çул пуçламăшĕнче вăл 14 миллиард тенкĕпе танлашнă пулсан, 1997 çул варринче уставнăй капитал 100 миллиард тенке çитрĕ.
2. Банкăн хăйĕн капиталĕ 1997 çулта 138 миллиардран тытăнса 279 миллиард тенке çити ӳсрĕ, урăхла каласан, 2 хут.
3. Банк активĕ 1997 çулта 779 миллиардран тытăнса 1180 миллиарда çити ӳсрĕ, урăхла каласан, 1,5 хут.
4. Банк тупăшĕ 1997 çулта 265 миллиард тенкĕ шутланчĕ, ку вăл 1996 çулхи баланс тупăшĕнчен 109 миллиард тенкĕ ытларах.
5. Юридически клиентсен хисепĕ (предприятисемпе организацисен) 1997 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен 906-ран тытăнса çулталăк вĕçлениччен 1600-ре çити ӳсрĕ.
6. Уйрăм клиентсен хисепĕ вара 62 пинрен тытăнса 64 пине çитрĕ.

Уйрăм тата юридически çынсене паракан услугăсене анлăлатасси банкăн тĕп задачисенчен пĕри шутланать. Хальхи вăхăтра Нурлатри филиал районта пурăнакансене çак услугăсене сĕнет:

1. Халăх вклачĕсене вăхăтлăха йышăнасси.
2. Урăх учрежденисенчен куçарнă укçана вкладчик счетне кĕртесси.
3. Вкладсене урăх кредит учрежденийĕсене куçарасси.
4. Банк килте тивĕçтересси.
5. Вкладчиксен укçине урăх кредит учрежденийĕнчи юридически çыннăн счечĕ çине куçарасси.
6. Граждансен вклачĕсене валютăпа конвертацилесси.
7. Ют çĕршыв валютине сутасси.
8. Халăхăн ют çĕршыв валютине куçарнă вклачĕсене вăхăтлăха йышăнасси.
9. Валюта вклачĕсене урăх кредит учрежденине куçарасси.
10. Коммуналлă услугăсен тӳлевне йышăнасси:
   - электроэнергишĕн
   - ăшăшăн
   - налуксем
   - шывшăн
   - хваттершĕн.
11. Мускаври Пĕтĕм тĕнчери Бизнеспа Информацилле технологисен Университечĕн Хусанти филиалĕнче вĕреннĕшĕн тӳлеве йышăнасси.

Юридици çыннисене филиал çак услугăсене сĕнет:

1. Расчет тивĕçтерĕвĕ, унта çаксем кĕреççĕ:
   - расчет, кулленхи, валюта счечĕсене уçасси;
   - клиентсем хăйсен расчет счечĕсем çинчен укçа-тенке кăларма ыйтсан вĕсене вăхăтра тӳлесси;
   - расчет, кулленхи счетсем тăрăх справка материалĕсене парасси;
   - клиент укçине Мускав хулине тата Мускав облаçне корреспондент счечĕсен системипе васкавлă (çав кунах) куçарасси;
   - илекен ыйтсан укçана факс тăрăх банка е хăйне парасси;
   - документсене ксерокопи тăвасси;
   - клиент ыйтнипе тӳлев поручениейĕсем пичетлесси;
   - клиент ыйтнипе документсене герб пичечĕпе çирĕплетесси;
   - картотека çинчен выписка тăвасси.
2. Касса тивĕçтерĕвĕ:
   - клиентсене расчет, кулленхи счетсем çинчи укçана тӳрех парасси;
   - валюта счечĕсем çинчи укçана тӳрех парасси;
   - банкнотсене банкнотсемпе улăштарасси;
   - кивелнĕ купюрăсене улăштарасси;
   - инкассациленĕ укçа-тенке тепĕр хут шутласси.
3. Хаклă хутсен операцийĕсем:
   - клиент ыйтнипе Патшалăхăн кĕске сроклă облигацийĕсен (ГКО) суту-илĕвĕ;
   - патшалăхăн перекет займĕн облигацийĕсен (ОГСЗ) суту-илĕвĕ;
   - хаклă хутсен операцийĕсен брокер услугисем;
   - вексель программисем.

"Девон-кредит" акционер банкĕн ĕçĕн мĕнпур çĕнĕлĕхĕ çак тĕллеве пурнăçлассипе çыхăннă - клиентсемпе ĕçлессин пахалăхне ӳстересси, вĕсем ыйтнине мĕнпур енчен тивĕçтересси.

Çакна пурнăçлама вара филиалти пĕчĕк коллективăн питĕ тĕплĕ те тĕллевлĕ ĕçлемелле. Пиртен кашни банкăн ырă ятне ӳстерессишĕн тăрăшать. Çакăнта вара паракан информаци тĕрĕслĕхĕ те, клиентсемпе ĕçленĕ вăхăтри хăвăртлăх тата тĕрĕслĕх те кĕреççĕ.

Филиал клиенчĕсемпе ĕçченĕсене хамăрăн пĕчĕк юбилей ячĕпе саламлатăп, филиал клиенчĕсене пире шаннăшăн пурне те тав тăватăп.

Малашне те пĕрле ĕçлессе шанатăп.

Эпир сире ырă сунса кĕтетпĕр!

**Н.Г.САЛАХОВА,**
**филиал управляющийĕ.**

## Клуба "ЮНИКС" ят пана

Нумаях пулмасть районти тĕп библиотекăн вулав залĕнче район администрацийĕ çумĕнчи çамрăксемпе ĕçлекен пайĕпе "Юникс" интеллектуаллă клуб "Ятсем - ĕмĕр тата çĕршыв урлă" вăйă йĕркелерĕ. Кунта малтанхи тестировани иртнĕ хулари пилĕк шкулти 9,10,11 классенче вĕренекенсем кĕчĕç.

Эпир пурăнакан çут тĕнчене ятсен тĕнчи теме пулать. Вĕсем мĕнле пулса кайнине, пĕлтерĕшне тĕрлĕ наука дисциплинисем тĕпчесе вĕренеççĕ. Анчах та чи малтан - ку лингвистика тата унăн ятарлă пайĕ - ономастика. Çак наукăн вăрттăнлăхĕсене - "ятсем пама пĕлнине" халалланăччĕ те çак вăййа. Вăл 5 турпа иртрĕ - "Минус пĕрре", "Ва-банк", "Михĕри кушак", "Аукцион". Вăйăра хăйĕн валюти - "Ăс" пурччĕ. Командăсен задачи: вăйă вĕçленнĕ вăхăта ытларах вăйă укçи пухасси. Ертсе пыракансем сĕннĕ конкурссене хутшăнса та пуянлăха ӳстерме пулать. "Аукцион" турта ставкăсене ӳстерсе 1-мĕш номерлĕ шкул команди малта пычĕ. 2-мĕш номерлĕ шкулта вĕренекенсем йăнăш тунипе юлашки икĕ тура хутшăнаймарĕç. 3-мĕш



номерлĕ шкул ачисем те питĕ вăйлă команда пулнине кăтартрĕç. Руслан Зартынов мала тухрĕ. Анчах та "Аукцион" турта пысăк ставкăсем туса, вĕсем 2-мĕш вырăна кăна йышăнчĕç. 4-мĕш номерлĕ шкул команди вăйăра кĕтнĕ тактика суйласа илсе, хăйсен хуравĕсене тĕплĕн шухăшласа, чи пысăк - 625 "ăс" пуçтарса, çĕнтерӳçе тухрĕ.

Клуба çамрăксемпе ĕçлекен пайра вăй хуракан Надежда Селуянова ертсе пырать, вăл хăй пултарулла организатор пулнине кăтартрĕ. Клуб ĕçĕн планĕнче - хĕллехи вăрмана экскурсие каясси, Менелниксен кунĕсем тата Сăваплă Валентинăн кунĕ.

Интеллектуаллă вăййа илес пулсан, вăл уйăхра пĕрре иртет. Тепри февраль уйăхĕ вĕçĕнче "Тĕнчене эпир мĕнпе тĕлĕнтерме пултаратпăр" ятпа иртĕ.

**Ф.ТИХОНОВА,**
**тĕп библиотека директорĕн çумĕ.**

Хăй вăхăтĕнче сысна ĕрчетессине районти выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче пысăк тимлĕх уйăратчĕç, аш туса илессипе, сутассипе эпир республикăра малти вырăнсене йышăнаттăмăр. Анчах та юлашки çулсенче ку отрасльти ĕçсем палăрмаллах вăйсăрланчĕç, сысна ĕрчетесси майĕпен юхăнса пычĕ, ытти сăлтавсемпе пĕрле сысна ĕрчетессине ăнăçлă аталантаракан тĕп факторсенчен пĕрне - тĕштырă ÿстерсе илесси чакнине те палăртаççĕ. Çавăнпа та районăн çĕнĕ ертÿçисем пĕрчĕллĕ культурăсен тухăçне ÿстерме тĕллев тытсан, çав вăхăтрах çак тупăшлă отрасле çĕнетсе яма задача палăртрĕç. Тăрăшни тÿрре тухрĕ, результатсем куç умĕнчех. Çулталăк хушшинче ытти çулсенчинчен çурри ытла нумайрах çура илтĕмĕр, сыснасен йышĕ те ÿсрĕ. Çак отрасльти ĕçсене чылай лайăхлатма "Нурлат" агрофирма йĕркелени те пулăшрĕ. Анчах та районти ĕçсем тивĕçлĕ шайра мар-ха, пĕр сысна аминчен çура илни те палăртнинчен чылай сахалрах, выльăхсем талăкра ÿт хушасси те пĕчĕккĕ, 11 пин пуç сысна самăртма хатĕрленĕ комплекс-автомат та халь çурма хăватпа çеç ĕçлет. Тĕп сăлтавсем - вырăнсенче çак отрасле çĕнетсе ярас ыйтăва тĕрлĕрен тимлĕх уйăрни, выльăхсен йышне пăхмалли требованисене çителĕклĕ пăхăнманни. Çавăнпа та специалистсем, ертÿçĕсем, выльăхсене пăхакансем сысна ĕрчетес ыйтăва тĕпрен улăштарас задача тăратнă. Эпир сĕнекен материал çак ĕçшĕн усăллă пулĕ тесе шутлатпăр.

# Лайăх пăхнă сысна - пуянлăх

Выльăхсен йышне пăхассине наукăпа çирĕплетнĕ нормăсене тĕпе хурса йĕркелесен, вĕсене çирĕп пăхăнсан, пĕр сысна аминчен 18-20 çура илме пулать, самăртсан вĕсем 2-2,5 тонна сысна ашĕ параççĕ. Паллах ĕнтĕ, кун пек пултăр тесен тÿрĕ кăмăлпа вăй хумалла, ĕçе тĕплĕ шухăшласа йĕркелемелле. Çавăнпа та зооветспециалистсен, ферма заведующийĕсен чи малтан ĕçе тĕрĕс йĕркелесе ямалла, унтан вара выльăх пăхакансенчен технологи требованийĕсене çирĕп пурнăçлама ыйтмалла.

## Сыснасен йышне ÿстерекен амана - тĕп тимлĕх

Сысна ĕрчетес ĕçре пысăк ĕрчевлĕ (пĕрре çăвăрласан 10 çураран кая мар) тата сĕтлĕ сысна амисемлĕ кĕтÿ йĕркелемесен, лайăх результатсем тума çуккине кашни специалист пĕлмелле. Сыснасен йышне ÿстерекен амана чи лайăх, пĕрре çăвăрласан 9-10 çураран кая мар пулнă амасенчен суйласа илеççĕ. Кĕтĕве ÿстерекен амасене сыснасем пăхакан чи лайăх ĕçченсене шанса параççĕ. Вĕсене уйрăм тытаççĕ, апатлантарма чи лайăх условисем туса параççĕ, хĕлле те, çулла та уçăлма илсе тухаççĕ. Çак сысна амисем лайăх шайра пулни - малашне ăнăçлăх тумалли тата кирлĕ чухлĕ çура илмелли шанчăк.

Сысна йышне ÿстерекен тата тĕп амасем нумайрах пулсан, вĕсене ушкăнпа çăвăрлаттарма çăмăлрах.

## Ушкăнпа çăвăрлаттарни

- ку, паллă ĕнтĕ, пĕр витере е пĕр ушкăнта кĕске вăхăтра - 7,14,21 кун хушшинче çурасем илни. Çакă сыснасене çăвăрлаттарнă вăхăтра дежурство йĕркелеме, ĕрчеве йышăнма май парать, çавна май хушса тата 25-30 процента çити çура сыхланса юлать.

Çăвăрлаттарассине тĕрĕс йĕркелесен витепе туллин усă курса пуян ĕрчев илме пулать. Аяларах ушкăнпа çăвăрлаттарассине йĕркелемелли график сĕнетпĕр.

| Çăвăрламалли тапхăрсем | Чуптармалли сроксем | Çăвăрламалли сроксем | 60 кунхи çурасене амăшĕнчен уйăрмалли сроксем | Витесене тепре çăвăрлаттарма хатĕрлени |
|---|---|---|---|---|
| I | 20.10-11.11 | 9.02 - 2.03 | 9.04 | майăн 3-мĕшĕ тĕлне |
| II | 19.01-09.02 | 11.05 - 1.06 | 8.07 | июлĕн 31-мĕшĕ тĕлне |
| IIа - çуллахи лагерьсенче | 11.02 -22.02 | 25.05 - 14.06 | 27.08 | лагерьсенче çăвăрлаттарма |
| III | 17.04 - 7.05 | 7.08 - 27.08 | 8.10 | октябрĕн 31-мĕшĕ тĕлне |
| IV | 18.07 - 7.08 | 7.11 - 27.11 | 8.01 | январĕн 31-мĕшĕ тĕлне |

Ушкăнпа çăвăрлаттарасси çине куçас тесен, чи малтан ăшă витесем (маточник-лагерьсем) кирлĕ. Сыснасем çăвăрланă вăхăтра тата пĕрремĕш икĕ кунĕнче витене хутмасан, çурасем сыхланса юласса шанма çук. Читлĕхсенче 26-30 градус ăшă тытмалла. Çак тĕллевпе витери урайсене ăшătaççĕ, ку питĕ меллĕ.

Сысна амисем усракан витесене генераторсемпе, котельнăйсенчен пыракан пăрăхсемпе ăшăтаççĕ, анчах та кунсăр пуçне ăшăтакан лампăсемпе усă курмалла, выльăхсен айĕсене ыраш улăмĕ сармалла.Çак требованисене тÿрĕ кăмăлпа пурнăçласа Муса Джалиль ячĕпе хисепленекен, Кузнецов ячĕпе хисепленекен, "Рассвет", Синдряков ячĕпе хисепленекен хуçалăхсенче пысăк ĕрчев илеççĕ тата вĕсене сыхласа хăварассине тивĕçтереççĕ. Пĕлтĕр юлашки виçĕ хуçалăхра 2900-3700 çура илме пултарнă, пĕрремĕшĕнче вара унччenхи кăтартăва икĕ хут ÿстернĕ.

Паллах ĕнтĕ, сывă ĕрчев илсе ăна çитĕнтересси чи малтан сысна амисемпе аçисене мĕнле пăхнинчен тата вĕсене чуптарма хатĕрленинчен килет. Ушкăнпа çăвăрлаттарма тытăниччен 40 кун маларах сысна аçисене чуптарма хатĕрлеççĕ. Чуптарнă вăхăтра аçасене 100 килограмм чĕрĕ виçе пуçне 3 килограмм апат единици парса лайăх апатлантармалла. Амасем çинчен каласан, вĕсене ытла самăр е начар пулсан чуптарма юрамасть. Ун пек амасен сĕтлĕхĕ пĕчĕккĕ.Чуптарас умĕн 15-20 кун маларах хĕсĕр амасене тĕрлĕ апатпа тăраниччен апатлантараççĕ. Пĕтĕ амана концентратсем çеç мар, çаплах сĕтеклĕ апат та памалла. Пĕр килограммшар виçеллĕ 10 çураран кая мар, çаплах лактаци тапхăрĕнче тутă тытакан япаласен резервĕ çителĕклĕ пултăр тесен, сысна ами пĕтĕ тапхăрта тата 30-50 килограмм ÿт хушмалла.

Чи кирли - сысна амисен рационĕнче лайăх пахалăхлă апатсем пулмалли. Çăвăрламалли амасене çĕрнĕ, шăннă, кăвакарнă апат çитерсен, вĕсен хырăмĕнчи çурасем вилме пултараççĕ. Чупнă амасене 2-3 кун хыççăнах станоксене уйăраççĕ те станоксем çине хăçан чупнине палăртса бирка çакаççĕ.

Çăвăрламалли ама юлашки уйăх çÿренĕ чухне рациона 4 килограма çити апат единици кĕртеççĕ, вĕсенчен 30 процентĕ пăрça шутланать, çаплах хăймасăр сĕт, курăк çăнăхĕ параççĕ. Çăвăрличчен 4 кун юлсан амана талăкра памалли рациона 30 процента çити чакараççĕ. Çăвăрличчен ама айне таса та ăшă ыраш улăмĕ сараççĕ. Сысна ами çăвăрлама апăтарасан ăна чăмлать, çакă хăвăртрах çăвăрлама пулăшать. Кайран вара амана тулă сăсăлĕпе пăтратнă пăтă çине 30 гр. пурă тата 20 гр. тăвар хушса параççĕ. Ĕмĕртекен сысна амисен сĕчĕ час чакать. Сĕт аннă пĕрремĕш эрнере вăл талăкра 6-7 килограмм шутланать, виççĕмĕш эрнере 10 килограма çитет те кайран вара хуллен чакать. Çавăнпа та сысна амисене апатлантарассине пысăк тимлĕх уйăрмалла. 100 килограмм виçеллĕ çамрăк амасене 3 килограмм апат единици тата кашни çура пуçне 0,5-шер килограмм апат единици уйăрса параççĕ.

## Ĕмекен çурасене уйрăм тимлĕх кирлĕ

Сысна амин мĕн чухлĕ чĕчĕ, ун патне çавăн чухлĕ çура хăвараççĕ. Килти выльăхсенчен сысна çеç хăйĕн çурисене тимĕрпе тата кальципе çителĕклĕ тивĕçтерейместь. Çурасен юнĕ сахалланать, çавăнпа та 3-мĕш тата 7-мĕш кунсенче вĕсене ферроглюкин, ферродекс эмелсемпе укол тăваççĕ, пурă, тырă, кăмрăк параççĕ. Вĕсем пулмасан çурасем хăйсен айне сарнă улăма хыпаççĕ, стенасене кăшлаççĕ, çакă вĕсен вар-хырăмне пăсать.

Икĕ уйăха çитиччен çурасене 7 килограмм таран хăймине уйăрман сĕт, 16 килограмм хăймасăр сĕт, 18 килограмм концентратсем, 2 килограмм курăк çăнăхĕ, 5 килограмм çĕрулми çитереççĕ. Хăймине уйăрман сĕт ялан пултăр тесен, сысна ферминче темиçе ĕне усрама май пур. Çаплах сĕте искусственнăй майпа хатĕрлеме пулать. Çурасене типĕ, пĕçермен концентрациленĕ апата çитерме пачах та юрамасть, вăл пысăк пахалăхлă пулсан та. Сысна çурисене кунне 4-5 хут çитереççĕ. Апатлантармалли график çакăн пек:

| Йĕрке номерĕ | Апатсем | 6-10 | 11-20 | 21-30 | 31-40 | 41-50 | 51-60 | Пурĕ килогрампа |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| 1 | Хăймине уйăрттарман сĕт | 50 | 150 | 250 | 100 | 50 | - | 6,75 |
| 2 | Хăймасăр сĕт | - | - | 150 | 300 | 500 | 600 | 15,5 |
| 3 | Тырă | 25 | 50 | 80 | 100 | 120 | 150 | 5,1 |
| 4 | Дерть | - | 50 | 100 | 200 | 300 | 550 | 12,0 |
| 5 | Курăк çăнăхĕ | - | 10 | 20 | 50 | 50 | 100 | 2,0 |
| 6 | Тăвар | 2 | 3 | 4 | 4 | 5 | 10 | 0,3 |
| 7 | Пурă | 3 | 3 | 5 | 5 | 10 | 15 | 0,4 |

Сывă ĕрчев илесси, ăна усрасси çăвăрламалли амасемпе çурасене прививкăсене вăхăтлă та тĕплĕ тунинчен те нумай килет. Юлашки çулсенче çакна валли укçа-тенкĕ çителĕклĕ уйăрманнипе ку ĕç пысăк сиен тÿсрĕ. Хальхи вăхăтра район ертÿçисем ветеринари енпе кирлĕ укçа-тенкĕ тупас тĕлĕшпе мерăсем йышăнаççĕ, ку тĕлĕшпе вырăнсенче те ĕçлемелле. Хуçалăхсенчи зооветспециалистсем тĕллевлĕ ĕçлесен çеç сысна ĕрчетессинче лайăх результатсем тăвасса шанма пулать.

**А.УХВАНЬКОВ,**
**районти ял хуçалăхĕпе апат-çимĕç управленийĕн выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе ĕçлекен пай начальникĕ.**

*Кухня валли çĕнĕ гарнитур сутатпăр. Адрес: К.Маркс урамĕ, 9-8.*

* * *

*Пĕр пÿлĕмлĕ хваттер сутăн илетĕп. Телефон: 5-29-59.*

* * *

*Икĕ камерăллă холодильник сутатăп. Телефон: 5-26-42.*

* * *

**ПĔЛТЕРЎСЕМ**

*3 пÿлĕмлĕ хваттер сутатпăр. Московская урамĕнчи 5-мĕш çуртри 45-мĕш хваттерте 17 сехет хыççăн ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Хваттер тара илетĕп. Телефон: 5-23-85.*

* * *

*Лаша, вăкăрсем тата сысна çурисем сутатпăр. Андреевка ялĕнчи 39-2-54 номерлĕ телефонпа Даниловран ыйтса пĕлмелле.*

* * *

*Апат-çимĕç комбиначĕ патĕнче гараж сутăнать, хаклă мар.*
*Телефон: 2-27-08.*

# Чăваш календарĕ



***КĂРЛАЧ - ЯНВАРЬ.*** Кун таврăнса хĕвел тӳпене улăхса пынăран "Кăрлач хĕрлĕ вăкăрăн хӳрине хăпартать" тенĕ. Кунсем шартлама сивĕ пулнăран "Кăрлач уйăхĕ кĕçĕн кăрлач мăйракине хуçать, пиччĕшне те çĕнтерет" тенĕ.

**Уявсемпе паллă кунсем:** Кăшарни (Хĕл эрни) - пĕр-пĕрин патне çĕр выртмаллах лашапа хăнана çӳренĕ (1-8 числосенче). Хĕр сăри - хĕрсем кӳршĕ ялсенчи тăван-хурăнташ хĕрсене хăнана чĕнсе хĕр сăри, хĕр ĕçки ирттернĕ. Уява кашниех хăйĕн сăрипе пынă, ĕçсе унăн пахалăхне тĕрĕсленĕ (6-8).

***НАРĂС - ФЕВРАЛЬ.*** Çанталăк çаплах сивĕ тăнăран "Нарăс уйăхĕ ваттине те чуптарать, юлхава та ташлаттарать" тенĕ. **Уявсемпе паллă кунсем:** Хĕллехи ĕçкĕ (3-5). Хĕр пăхма çураçма çӳренĕ вăхăт (3-15). Ăшăпа сивĕ тавлашнă кун (15). Карта йышне чӳклени - тултах пăтă пĕçерсе виçĕ çăпала картишне сапнă, выльăх туррисене чысласа чӳк апачĕ çинĕ, сăра ĕçнĕ, çурт-йĕр тавра çуннă вутпуççисем лартса тухса кашкăр туйне хăратнă (17-19).

***ПУШ - МАРТ.*** Пушă вăхăт, хĕр çураçса пушă пăрахнă уйăх. Çăварни чупнă уйăх. "Пушă уйăх сарай çунаттинчен пăрпа тумла юхтарать, шăтăкĕнче çывăракан упана çавăрса вырттарать, суха пуçпе урапа çинчен аса илтерет".

**Уявсемпе паллă кунсем:** хĕвел çаврăнни, чăваш çăварни эрни. Сĕрен е вирĕм кунĕ (19).

***АКА - АПРЕЛЬ.*** "Ака уйăхĕ тимĕрçĕ лаççине уçать, суха пуçне тупать, вăрлăх тасатать, ака тăвать, ака пĕтерсе пăтă пĕçерет, выльăх-чĕрлĕхе картаран кăларать, кĕтĕве ярать. Ака уйăхĕ пир çапать, хĕр парнине хулăмлатать".

**Уявсемпе паллă кунсем:** Йĕрĕх эрни. Юр кайса çĕр уçăлнă эрне (7-15). Çĕр чĕрĕлнĕ кун, пĕрремĕш аслати кунĕ. Ака пăтти, акана тухнă, ака пĕтернĕ кунсем. Хурт чӳкĕ - вĕллери хурт амине чӳкленĕ кун (1-7). Мăнкун (19).

***ÇУ - МАЙ.*** "Çăва тухсан лĕпĕшсемпе пĕрле ваттисем те чĕрĕлеççĕ. Çу уйăхĕ выльăха ура айĕнчи апатпа усрать".

**Уявсемпе паллă кунсем:** çурхи ĕçсене пĕтерсен киреметре е чӳк вырăнĕнче (чукырта) аслă чӳк ирттернĕ. Ун хыççăн тепĕр кунне е тепĕр эрнере акатуй уявĕ тунă. Карта йыш чӳкĕ - выльăха хăтлăх паракан турăсене асăнса ирттернĕ чӳк (5). Çурхи чӳк (28).

***ÇĔРТМЕ - ИЮНЬ.*** Çĕртме уйăхĕ. Хĕрупраç туйĕсен вăхăчĕ. Хĕвел хăватланнă вăхăт.

**Уявсемпе паллă кунсем:** чукырти е киреметри чӳк (2). Çумăр е çерçи чӳкĕ (12-30). Çинçе (25).

***УТĂ - ИЮЛЬ.*** Хĕвел тухиччен тăрса ĕçе пуçăннăран чăваш: "Ман çине хĕвел ӳкмен", - тенĕ. Утă-курăк ӳссе çитнĕ, выльăх тăраннă вăхăт.

**Уявсемпе паллă кунсем:** утă чӳкĕ - улăха пăтăпа чӳкленĕ. Пилĕке утă ярăмĕнчен пĕтĕрсе тунă пиçиххипе çыхнă (1-2). Уй-хир ĕçĕсем умĕнхи чӳк (7). Хурт чӳкĕ - вĕлле хурчĕн амине караслă пылпа чӳкленĕ. Çывăх тăвансене çĕнĕ пылпа хăналанă (14).

***ÇУРЛА - АВГУСТ.*** "Çурла ана кăшлать, çĕмел лартать. Çурла пилĕке таять, хул пуççи çине ларать".

**Уявсемпе паллă кунсем:** Аслати эрни (1-7). Ĕлен (2). Çĕнĕ тырă чӳкĕ - çĕнĕ çăнăхран çăкăр пĕçернĕ, ана туррисене асăнса чӳк тунă, пĕлтĕрхи тырра киветнĕ (18-25). Кĕрхи ака пăтти (25-31).

***АВĂН - СЕНТЯБРЬ.*** "Авăн шăрши чуна савать, ларнă капан куçа савать".

**Уявсемпе паллă кунсем:** авăн пăтти (1-3). Автан сăри (15-17). Чӳклеме (22-24). Çĕрпе кун танлашни, çĕр таврăнни (23).

***ЮПА - ОКТЯБРЬ.*** "Юпа уйăхĕ хирти ĕçе пĕтерет. Урпа вырса пĕтерсен кĕрхи ĕçкĕ тăваççĕ".

**Уявсемпе паллă кунсем:** хурт чӳкĕ - юлашки хут вĕллесене пăхса тĕрĕслесçĕ те чӳк тунă хыççăн 3-4 эрнерен утар çуртне е тĕпсакайне лартаççĕ (1). Сĕрен е вирем - вилнисен чунĕсене ялтан ăсатса яраççĕ (13). Юпа - çак çулталăкра вилнĕ çын тăпри çине юпа палăк лартаççĕ (20). Кĕрхи çимĕк - масар çине тухса ваттисене асăнаççĕ (22). Кĕрхи ĕçкĕ (22-24).

***ЧӲК - НОЯБРЬ.*** Ĕçсене пуçтарса кĕртнĕ уйăх. Выльăх шутламалли уйăх. Пӳрт-çуртри ăшпа хупакан уйăх.

**Уявсемпе паллă кунсем:** хĕрт-сурт чӳкĕ - кил çурта сыхлакан Турра асăнса хĕрт-сурт пăтти пĕçерсе çиеççĕ (3). Карта йыш чӳкĕ - хĕл каçарма хăварнă выльăх картинче пăтă пĕçерсе çиеççĕ (10-12). Шыв чӳкĕ - çăлкуçсене тасатаççĕ, лаша шăвармалли валаксем, валашкасем лартаççĕ, шыв хуçисене асăнса кĕселпе чӳк тăваççĕ (17-19). Çулталăк чӳкĕ, хĕл умĕнхи чӳк (24-27).

***РАШТАВ - ДЕКАБРЬ.*** Çул-йĕр хупăннă, çын çула тухман уйăх. Улах лармалли уйăх. Вăрă-хурах пусмăрламан уйăх.

**Уявсемпе паллă кунсем:** шуйттан эрни (карачун эрни) - ку вăхăтра хĕвел халсăрланса пырать, кун катăлса çитет (15-22). Кун таврăнни (25). Сурăхсем пăранласа пĕтернĕ вăхăт, сурхури (25-31). Çĕнĕ çул каçĕ (31).

# Саламлатпăр!



**Ерепъеленче пурăнакан юратнă шăллăмăра *Феликс Алексеевич Соловьева* 25 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн ăшшăн саламлатпăр.**

**Йывăçсем те саламлаççĕ**
**Ал çупса паян сана,**
**Те вĕсем те ăпланаççĕ**
**Кун пек кун пĕрре кăна.**

**Ким, Наташа тата Мариночка.**

---



**Вăтам Хăмăшлăра пурăнакан *Валерий Петрович Левакова* çуралнă кун ячĕпе чун-чĕререн саламлатпăр. Хуйха-суйха хыçала хăварса, мал ĕмĕте шанса пурăнма, çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.**

**Тăванĕсем.**




***Мамăк ялĕнчи инкубатор станцийĕ март уйăхĕнче тухакан чĕпсене туянас текенсенчен заказ йышăнать. Укçана малтан тӳлемелле. Телефон: 4-12-46.***

* * *

***1992 çулта туса кăларнă ВАЗ-21099 сутатпăр, "лагуна" тĕслĕ, 1996 çулта кузовне улăштарнă, автомагнитола, сарлака резина, чехолсем пур. Хакĕ 35 пин тенкĕ. Çирĕклĕ ялĕнчи Альфис Хаммадиевран ыйтса пĕлмелле.***

* * *

***Уйрăм çурта 2 пӳлĕмлĕ хватterpe улăштаратпăр. Адрес: Южная урамĕ, 15.***

* * *

***"Нурлат строительство материалĕсем" ОАО Мамăк ялĕнчи "Строительство материалĕсем" магазинăн пĕр пайне тара парать. Хакĕ калаçса татăлнă тăрăх.***

* * *

***1991 çулта туса кăларнă ВАЗ-21053 сутатпăр. Якуркел ялĕнчи Николай Васильевич Терентьевран ыйтса пĕлмелле.***

* * *

***Силикат кирпĕч (Димитровград, Ульяновск хулисенчен), 200х200х400 керамзитпа бетон блоксем, пенопласт сутатпăр. 0004009 номерлĕ свидетельствăна Димитровград хулин администрацийĕ панă. Телефон: (84-235-6-81-13).***

***М.Б.Багрянцев врач çынсене эрех ĕçнинчен тата табак туртнинчен пĕр сеансра сиплет.***

***Пирĕн патра кăна!***

***Сеанса пĕтĕмпех анонимлă ирттеретпĕр. Сипленĕ чухне тăванĕсем пулма пултараççĕ. Справка паратпăр. Консультаци, калаçу, каярахри сăнавсем тата кодировани хыççăнхи пулăшу - тӳлевсĕр!***

***Сипленĕ кун, эрнекунсенче, февралĕн 27-мĕшĕнче, мартăн 13-мĕшĕнче районти культура çуртĕнче 11 сехетре çырăнтару тата калаçу ирттеретпĕр. Лицензи МЗ РФ N00164-30, 1995 çулхи январĕн 16-мĕшĕнче панă.***

* Улах юррисем

## Авăнман йывăçа авас терĕм

Авăнман йывăçа авас терĕм,
Темĕн чухлĕ çĕмĕрт татас пек.
Çакăн чухлĕ пĕве эп ӳстертĕм,
Темĕн чухлĕ ырлăх курас пек.

Пĕчĕккĕ чух эпĕ пĕчĕккĕччĕ,
Шăл хушшинчи мăйăр тĕшĕччĕ.
Пĕчĕккĕрен пысăк, ай, эп пултăм,
Ăраскалăм çукран хур пултăм.

Ир пулать-ши паян, каç пулать-ши,
Элле кăнтăрлахи вăхăт-ши?
Ыр курĕ-ши пуçăм, ыр курмĕ-ши,
Элле ĕмĕр çаплах иртĕ-ши?

Ула хурсем шыва, ай, кĕреççĕ,
Урасем шуралччăр, теееççĕ.
Пире кураймансем, ай, çиеççĕ,
Çынлăхран кăларас теееççĕ.

Аттăмăрсем лайăх сăран тесе
Урăрсене урлă ан пусăр.
Эпĕ пуян çыннăн ачи тесе
Çын çĕклейми сăмах ан калăр.

Ик хут чӳречӳне яр уçса яр -
Çакса хунă сĕлкĕр вĕл вĕçтĕр.
Сăмахна каласан хама кала
Санран ман кăмăлăм сивĕнтĕр.

**Пухса йĕркеленĕ Е.ИЛЮШКИНА.**

# Котельнăйсенчи пушар

Республикăра пушар час-часах пулни пăшăрхантарать, котельнăйсенче тата ытти ăшăтакан установкăсемпе усă курнă чухне пушар хăрушсăрлăхĕн правилисене пăснипе пушарсем тухаççĕ.

1997 çулта çак сăлтава пула республикăра 24 пушар пулнă, вĕсенче пĕр çын вилнĕ тата виççĕн суранланнă. Пурлăх енчен чылай сиен кӳнĕ.

Хăшпĕр чухне шĕвĕ топливо вырăнне хутса ăшăтакан çĕрте усă курма юраман, час хыпса илекен шĕвексемпе усă курнипе пушар пулать.

Çапла, 1997 çулхи февралĕн 4-мĕшĕнче Лениногорск районĕнчи Новая Чершила ялĕнчи шкул котельнăйĕнчи кăмакаран çулăм персе тухнă. Топливо вырăнне кунта уйрăмах хăрушă шĕвекпе усă курнă, нормăпа плюс 45 градус Цельси вырăнне минус 13 градусран каярах пулнипе хыпса илнĕ.

1997 çулхи декабрĕн 9-мĕшĕнче Тетĕш ялĕнчи "Сельхозтехника" АООТ котельнăйĕнче пушар тухнă. Сăлтавĕ - топливо вырăнне "Нижнекамскнефтехим" акционер обществи туса кăларакан хăрушă та питĕ хăвăрт хыпса илекен "А-4" абсорбентпа усă курни.

Нумаях пулмасть "Тĕрнеç" ялĕнчи шкул котельнăйĕнче пушар тухнă. Ун çинчен хаçатра çырнăччĕ ĕнтĕ.

Интересленекен ведомствăсен ертӳçисене котельнăйсемпе ăшăтакан установкăсене пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес тĕлĕшпе васкавлă мерăсем йышăнма ыйтатпăр.

**Н.СУЛЕЙМАНОВ,**
**73-мĕш ПЧ начальникĕн çумĕ, шалти служба майорĕ.**

Тĕп редактор Р.Ф.ЗАМАЛЕЕВ.

Редактор тивĕçĕсене пурнăçлакан Т.И.БУРАЙКИНА.

Учредительсем: Нурлат районĕн администрацийĕпе редакцин ĕç коллективĕ

Хаçат эрнере виçĕ хутчен - юнкун, эрнекун, шăматкун тутарла, вырăсла тата чăвашла тухать.

**ПИРĔН АДРЕС:** 423000, Нурлат хули, Карл Маркс урамĕ, 19.
**ТЕЛЕФОНСЕМ:** редактор - 2-12-14, 2-22-81, редактор заместителĕ тата советсемпе обществăлла организацисен пурнăçĕн пайĕ - 2-10-44, редактор заместителĕ, яваплă секретарь - 2-18-67, редакторăн вырăс дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-14-16, редакторăн чăваш дубляжĕ енĕпе ĕçлекен заместителĕ - 2-10-44, ялхуçалăх пайĕ, промышленность, çырусемпе массăлла ĕç пайĕ - 2-22-51, бухгалтери, реклама пайĕ тата фотокорреспондент - 2-15-63.

Хаçата Тутар Республикин Информаципе пичет министерствинче шута илнĕ.

Регистрациленĕ номерĕ 34.

Димитровградская типография управления печати и информации Ульяновской области. Печать офсетная. Объем -1 печатный лист. Тираж 863.